27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

ОКТЯБРЬ 21 1944 ШАМАТКУН № 208 (5703)

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, утă çарпа танковăй соединенисен аякран çавăрса илмелли маневр туса ирттерни хыççăн, çакăнпа пĕрлех фронтран атакăласа, паян, октябрĕн 20-мĕшĕнче, Венгрин пысăк промышленноçть центрĕ пулса тăракан ДЕБРЕЦЕН хулине — тăшман çулĕсен паха узелне тата тăшман оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне штурмласа туртса илнĕ.

ДЕБРЕЦЕН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ГОРШКОВ генерал-лейтенантăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн, СЛАНОВ генерал-майорăн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорăн, КРУТОВСКИХ генерал-майорăн, РЕВА полковникăн, ДЕМЧУК полковникăн Кубаньпе Дон казакĕсен кавалеристĕсем; КУЦ генерал-майорăн, ПАВЛОВ генерал-майорăн, БЕЛОУСОВ генерал-майорăн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорăн кавалеристĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КРАВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн АХМАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КАТКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн САВЕЛЬЕВĂН, БЕЗНОЩЕНКО полковникăн, ШТАНЬКО полковникăн, ВОРОН подполковникăн, ИВЛИЕВ подполковникăн, МАРШЕВ полковникăн, ЖУКОВ полковникăн, КОПИЕНКО полковникăн, СИМЕЛКОВ майорăн, ЖИЛИН полковникăн, ПАВЛОВСКИЙ подполковникăн, ЛИТВИН майорăн танкисчĕсем; СЕМЕНОВ генерал-майорăн, МИХАЙЛОВ генерал-майорăн, ГОРОБЕЦ полковникăн пехотăй дивизийĕ; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВĂН, МАРЧЕНКО полковникăн, ДЕРЕБЕНЕЦ полковникăн, ФЕЛЬДМАН полковникăн, ТИХОМИРОВ полковникăн, ГРИШИН полковникăн, ЗРИСТОВ полковникăн артиллеристĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СТЕПИЧЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ПРОСТОСЕРДОВĂН, ШУТЕЕВ подполковникăн, ТАРАНЕНКО полковникăн, ЮДАКОВ полковникăн, ГЕЙБО полковникăн, ЧИЖИКОВ полковникăн, ЧАНПАЛОВ полковникăн, ИЛЛАРИОНОВ майорăн, МАТВЕЕНКО майорăн летчикĕсем; инженер çарсен генерал-лейтенанчĕн ЦИРЛИНĂН, ФАДЕЕВ полковникăн, ГОЛУБОВИЧ подполковникăн, ФИЛЯНИН полковникăн, КОВАЛЕНКО полковникăн, ХОДАРЕВ майорăн, ГУСОВ майорăн, БАДАЕВ подполковникăн, КОЛОСОВ подполковникăн, ПОЛЕТАЕВ подполковникăн саперĕсем; сыхăну çарсен генерал-лейтенанчĕн ЛЕОНОВĂН, БУНИН полковникăн, ШЕРВУД полковникăн, СТРЕЛЕЦКИЙ подполковникăн, ЯЦЕНКО подполковникăн, ЧЕПЕЛЕВ майорăн, ЛУНЬЯНОВ подполковникăн, КЛИМОВ майорăн, КАРПОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялланлăха палăртса хăварас тесе, ДЕБРЕЦЕН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă чаçсемпе соединенисене «ДЕБРЕЦЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 20-мĕшĕнче, 21 сехет те пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ДЕБРЕЦЕН хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан çарсене, ДЕБРЕЦЕН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн тата пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, ЮГОСЛАВИ ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ ÇАРĔСЕМПЕ пĕрле, вăйлă çапăçусем хыççăн БЕЛГРАД хулинче нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçлесе те паян, октябрĕн 20-мĕшĕнче, пирĕн союзлă пулса тăракан Югослави столицине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

БЕЛГРАДА ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ГАГЕН генерал-лейтенантăн, ШКОДУНОВИЧ генерал-майорăн, АКИМЕНКО генерал-майорăн, КРАВЦОВ генерал-майорăн, ЛАЗАРЕВ генерал-майорăн, КОЗАК генерал-майорăн, МИЛЯЕВ генерал-майорăн, МУХАМЕДЬЯРОВ полковникăн, САГИТОВ полковникăн, САЛЫЧЕВ полковникăн, КУЛИЖСКИЙ полковникăн, СИДОРЕНКО полковникăн, СЫЧЕВ полковникăн, БОЛДЫНОВ полковникăн, çарĕсем; ПЕКО ДАПЧЕВИЧ генерал-лейтенантăн, ДАНИЛО ЛЕКИЧ генерал-лейтенантăн, ДИСОКО ЙОВАНИЧ полковникăн, МИЛОШ ШИЛЕГОВИЧ подполковникăн, РАДЕ МИЛОЕВИЧ полковникăн, ВАСО ЙОВАНОВИЧ полковникăн, РОДОСЛАВ ЙОВИЧ полковникăн, МИРКО ПЕРЕЧИН полковникăн Югослави çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ВОЗНЮКĂН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЙДОН, ДАНЬШИН полковникăн, ГЛАДКОВ полковникăн, БЫКОВСКИЙ полковникăн, СОЛОВЬЕВ полковникăн, НЕЧАЕВ подполковникăн, СМОЛЬКИН подполковникăн, МАХЛИН подполковникăн, ЛЕОНОВ подполковникăн, СЕЛЕЗНЕВ майорăн, НИЗКОВ майорăн, РОДИОНОВ майорăн, ЛЕОНОВ майорăн, ШАРИН майорăн, ДАМАЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОРУЧКИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВĂН, СЕРГЕЕНКО полковникăн, НИКИТИН полковникăн, АНДРИЯНОВ полковникăн, ЗАВЬЯЛОВ полковникăн, ЖУКОВ полковникăн, ДВОРКИН подполковникăн, ШЕВКИН майорăн, КОТИЛОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКĂН, СМИРНОВ полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн, ИВАНОВ полковникăн летчикĕсем; ГОРШКОВ вице-адмиралăн, II-мĕш рангри капитанăн ДЕРЖАВИНĂН, БАРБОТЬКО капитан-лейтенантăн, БУТВИН старши лейтенантăн, ЯБЛОНСКИЙ подполковникăн карапĕсемпе Дунай çинчи çар флотилийĕн чаçĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, ЗАГРЕБИН полковникăн; ИЛЬЧЕНКО полковникăн, БАБУРИН полковникăн, ГОНЧАР подполковникăн, ЗАЙЦЕВ инженер-майорăн, КОВАЛЕВ майорăн, ЗЕМЛЯНУХИН майорăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, СТАРОЛЕТОВ полковникăн, КОБА подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялланлăха палăртса хăварас тесе, БЕЛРГАД хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «БЕЛГРАДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 20-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх армийĕн паттăр çарĕсене, Югослави столицине,—БЕЛГРАД хулине ирĕке кăларнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан çарсене, БЕЛГРАД хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн тата тăванла Югославин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ.

469 МИЛЛИОН ТЕНКĔЛĔХ ÇĔНĔ ВКЛАДСЕМ

Перекет кассисенче вкладсен сумми пĕр чарăнмасăр ÿссе пырать. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче перекет кассисене халăх хывнă вкладсен сумми 469 миллион тенкĕ чухлĕ ÿснĕ. Мускаври, Ленинградри, Свердловскри, Челябинскри, оккупациренирĕке кăларнă районсенчи перекет кассисене пысăк суммăсем хураççĕ. Çапла, III-мĕш кварталта Украинăри перекет кассисене 50 миллион тенкĕ хунă. (ТАСС).

Колхозсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ

Фронтри пек ĕçлесе, фронтовиксене пулăшар

Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем чунтан-чĕререн ырларĕç. Государство планĕнчен ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассине эпир савăнсах йышăнтăмăр.

65 çулхи старик, Вандеев Кузьма (фронтовик ашшĕ) пухура хумханса ăмах тухса каларĕ:

— Пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар нимĕç вăрăхурахĕсене хăйсен юнлă шăтăкĕ патнелле хăваласа пырать. Вăл тискер кайăка хăйĕн хура юнĕ ăшне путарса вĕлерсен кăна эпир канлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнма пултаратпăр. Çапла тăвас тесен, Хĕрлĕ Çара пирĕн пĕтĕм вăйпа пулăшмалла, пулăшатпăр та, — терĕ вăл. Ун хыççăн Тимофей Александров юлташ сăмах тухса каларĕ. — Эпĕ нимĕçсене хирĕç 1914 çултах çапăçнă. Канлĕ ватăлăх, савăнăçлă çамрăклăх пултăр тесен, нимĕç захватчикĕсене вĕлерес пулать. Эпир фронтран ытла та аякра пурăннă пирки, нимĕç текен вăрă-хураха вĕлерейместпĕр. Анчах та Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерессĕ. Çĕнтерÿ кунне çывхартас тесен, Хĕрлĕ Çара пулăшмалла, — терĕ вăл. Пухура пулнă ытти колхозниксем те çав шухăшсемпе килĕшрĕç. Колхозниксем вара Хĕрлĕ Çар фондне 1.260 пăт тырă пама йышăнчĕç. Çак тырра эпир октябрĕн 18—19-мĕшĕсенче парса татрăмăр.

Пирĕн колхоз государство умĕнче парăмлă мар. Государствăна эпир тырă парса татнă, 1945 çулта тÿлемелли натуроплатăна та 1.200 пăт парса хунă. Государствăна аш-какай 1946 çулшăн та панă. Çăма та 1945 çулшăн та парса татнă.

Пирĕн колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Кĕрхи çĕртме 340 гектар туса, плана ытлашшипех тултарнă. 5-мĕш бригадăри В. Степанова, Н. Григорьев хăйсен нормине кашни кунах 120—130 процентшар тултарса сухаларĕç. Халĕ выльăх-чĕрлĕх витисемпе ферма çурчĕсене хĕллене хатĕрлетпĕр. Ку ĕçе çак кунсенчех туса пĕтеретпĕр.

Пирĕн колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Выльăхсем валли те, хамăр валли те апат-çимĕç çителĕклĕ. Кашни гектартан 1.600 пăт çĕрулми, 2.500 пăт кăшман туса илтĕмĕр. Кăçал пирĕн ĕçкунĕ тăрăх валеçме те чылай тырă, пахча-çимĕç тата çĕрулми пур. Колхозри тĕрлĕ фондсене хывнă хыççăн çав продуктсене валеçме тытăнатпăр. Çапла кĕтсе илетпĕр эпир Октябрь революцийĕ 27 çул тултарнă уява.

П. АНДРЕЕВ,
Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ.

Çăмарта хатĕрлес ĕçе манма юрамасть

Государствăна обязательство тăрăх çăмарта памалли сроксем иртсе пыраççĕ. Республика çăмарта хатĕрлемелли плана паянхи кун тĕлне пурĕ те 34,4 процент çеç тултарнă.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк продукчĕсем парас тĕлĕшпе яланах малта пыракан Элĕк, Вăрмар тата Çĕрпÿ районĕсем те çăмарта хатĕрлемелли плана 65—78 процент таран кăна тултарнă. Юлса пыракан Шăмăршă, Кувакино, Чкаловски, Çĕмĕрле, Пăрачкав тата Комсомольски районсем вара çак вăхăта çитсе те плана 5—8 процент кăна тултарнă.

Тÿрех каламалла, уйрăм районсем çăмарта хатĕрлесси çине çултан çул кирлĕ пек пăхман.

Шăмăршă, Кувакино, Чкаловски, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Комсомольски районсен руководителĕсен ку тĕлĕшпе пикенерех ĕçлемелле, çăмарта хатĕрлесси питĕ кирлĕ ĕç пулса тăнине пур колхозниксемпе колхозницăсене те тĕплĕн ăнлантарса памалла.

А. ДЕМИДОВ,
Уполнаркомзагăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен секторĕн начальникĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

КУКЕÇ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă парассишĕн республикăри колхозсем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçарса янă Шупашкар районĕ, Хĕрлĕ Çар фондне малтан 32 пин пăт тырă пама пулса, ăна парса татрĕ те халĕ татах 3000 пăт тырă пачĕ.

Çапла районри колхозниксемпе колхозницăсем патриотла чаплă ĕç турĕç.

* * *

МУРКАШ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене тата пикенерех ĕçлеме хавхалантараççĕ. Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине пирĕн районри колхозсенче пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç, вĕсен чĕнĕвне пур тĕлте те ырлаççĕ. Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă пама пулаççĕ. Пирĕн районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 30.000 пăт параççĕ. Енерхи кун тĕлне 18.000 пăт ытла государство склачĕсене леçсе панă. Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывасси уйрăмăнах «Крестьянин», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенче пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. «Крестьянин» колхоз 376 пăт, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз 360 пăт пĕр кун хушшинче леçсе, хăйсен обязательствисене пурнăçларĕç. «Коммунизм» колхозра Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине ĕçчен кăна сÿтсе-яврĕç. Пухăва пухăннă колхозниксем, пĕр кăмăллă пулса, çапла йышăнчĕç:

— Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерÿсем тăвать, тăшмана аркатса тăкас вăхăт çывхарчĕ. Государствăна тырă парса татнă эпир, анчах та Хĕрлĕ Çар валли тырă пама яланах хатĕр, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар фондне тырă пани — тăшмана хăвăртрах çĕнтерессишĕн кĕрешни пулать, — терĕç колхозниксем. Вĕсем 205 пăт пама пулчĕç. Çак тырра пĕтĕмпех ĕнерех государство складне леçсе пачĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра ыран парса пĕтеретпĕр.

Çавăн пекех «Красное Знамя», «Красное Сормово» тата ытти кохозсем те хăйсен обязательствисене татмалăх тырă ячĕç.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрĕн 22-мĕшĕнче государствăча тырă леçсе парас ĕçе вĕçлес тĕлĕшпе массăллă воскресник ирттерме йышăннине пирĕн колхозниксем хапăл туса йышăнчĕç.

Вырсарникун пулса иртекен массăллă воскреснике большевикла хутшăнса, эпир государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те парса татас ĕçе организацилетпĕр, çак тĕлĕшпе колхоз председателĕсене пулăшма районри парти тата совет активне ялсене кăларса яратпăр.

В. ИЛЬИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СĔНТЕР, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 30.000 пăт пама йышăннă. Октябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне 14.000 пăт панă. Хĕрлĕ Çар фончĕ валли тырăпа паян 600 лав ытла тухса кайнă.

* * *

ЭЛĔК, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем фронтри пек ĕçлерĕç. Государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырра пĕтĕмпех парса татрăмăр. Ун хыççăн пирĕн колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 20.000 пăт пама пулчĕç. Октябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне районри 32 колхоз хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçларĕç, государство складне 11.389 пăт тырă леçсе пачĕç. Паян районри пур колхозсем те Хĕрлĕ Çар фондне памалли тырра парса татаççĕ.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина колхозникĕсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама чĕнсе калани районри колхозсенче социализмлă ăмăртăвăн хумне анлăн хускатса ячĕ. Октябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне районри пур колхозсем те обязательнăй йĕкепе памалли тырра, МТС ĕçленĕшĕн натуроплатăна тата ытти парăмсене те пĕтĕмпех парса татрĕç. Хĕрлĕ Çар фондне 32.000 пăт пама пулчĕç. Хĕрлĕ Çар фондне малта пыракан «Чăваш Коммуни» колхоз 1300 пăт, «Трактор» колхоз 1300 пăт, «Çутталла» колхоз 1000 пăт, «Первое мая» колхоз 1.500 пăт тырă пама пулнăччĕ. Вĕсем хăйсен обязательствине чыслăн пурнăçларĕç. Паянхи кун тĕлне районри 58 колхозран 35-шĕ Хĕрлĕ Çар фондне памалли тырра парса татрĕç. Паян ирхине илнĕ даннăйсем тăрăх, районĕпе Хĕрлĕ Çар фондне 17.000 пăт леçнĕ. Паян 700 лав тырă тиесе кайчĕ. Ыран ку ĕçе ăнăçлăн вĕçлетпĕр тесе шантарма пулать.

С. САПЕРКИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государствăна аш-какай парасси— ответлă ĕç

Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерÿсем туни тылри ĕççыннисене хавхалантарать. Республикăри нумай колхозсем Октябрь уявне государство умĕнчи пур тĕрлĕ обязательствăсене те парса татнипе кĕтсе илеççĕ. Сăмахран Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлнех государствăна аш-какай памалли плана 115,9 процент тултарнă. Çак ĕç Красноармейски районра та лайăх пырать. Районри колхозсем аш-какай памалли плана 94,5 процент тултарнă. Çавăн пекех Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Элĕк, Шупашкар, Сĕнтĕр районĕсем те плана 75—85 процент пурнăçланă.

Анчах пĕтĕм республикипе илсен, государствăна аш-какай парасси çителĕксĕр пырать-ха. Плана ку енĕпе пурĕ те 63,6 процент кăна тултарнă. Государствăна аш-какай парасси уйрăмăнах Пăрачкав, Комсомольски, Шăмăршă, Йĕпреç, Чкаловски районсенче япăх пырать.

Комсомольски район аш-какай памалли çулталăкри плана пурĕ те 32,1 процент кăна тултарнă. Чурачăк районĕ ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тата государствăна тырпул парас тĕлĕшпе малта пырать, анчах çав вăхăтрах государствăна аш-какай памалли çулталăкри плана пурĕ те 45,6 процент кăна тултарнă. Республикăри районсем хушшинче вăл 27-мĕш вырăн йышăнать. Калинино районĕ 23-мĕш вырăна анса ларчĕ. Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Елчĕк, Муркаш районĕсем те аш-какай памалли плана çурринчен ытларах кăна тултарнă.

Государствăна аш-какай парасси — ответлă ĕç. Аш-какая халĕ, кĕркунне, выльăх-чĕрлĕхсем самăр чухне тата кайăк-кĕшĕксем пур чухне парса татни колхозшăн та, государствăшăн та усăллă. Çакна асра тытса, кашни колхозăн государствăна аш-какай халĕ, кĕркунне, парса татмалла тата 1945 çулшăн та аванс шучĕпе пама тăрăшмалла. Малта пыракан колхозсем çапла тăваççĕ те.

Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсемпе райисполком председателĕсен колхозсенче государствăна аш-какай парасси мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, обязательствăна кашни колхозах вăхăтра парса таттăр тесе, ĕçе оперативлă ертсе пымалла.

Совет Союзĕн Наркоминделĕнче

Финляндипе перемири çинчен Килĕшÿ тунă пирки (çав Килĕшĕвĕн 7-мĕш статьи тăрăх Петсамо (Печенга) облаçне Финлянди Совет Союзне тавăрса панă), Англипе Канада концессионерĕсене, Петсамăри никель рудникĕсемпе усă курма право пулнăскерсене, укçа тÿлесе татмалли йĕрке çинчен СССР, Великобритани тата Канада Правительствисем октябрĕн пĕрремĕш çурринче пĕр-пĕринпе калаçнă.

Совет Правительстви çав концессионерсене укçа тÿлесе татма килĕшнĕ те малта асăннă виçĕ Правительствăн представителĕсем вара аялта кăтартнă Протокола çырса алă пуснă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешÿллĕ Королевстви Финляндипе 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче тунă Килĕшÿ çумне çырса хунă ПРОТОКОЛ

Финлянди Правительствипе перемири çинчен Килĕшÿ тунă чухне Совет Союзĕн, Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешÿллĕ Королевствин тата Канадăн Правительствисем çакăн пирки калаçса татăлнă:

Финлянди Совет Союзне ĕлĕкрех ун аллинче пулнă Петсамо (Печенга) облаçне тавăрса панă пирки, çавна пула вара çав территорире «Монд Никель» Обществи тата Канадăри Пĕтĕм тĕнчери Никель Компанийĕ усă курса пурăннă никель рудникĕсем хăйсен пĕтĕм пурлăхĕпе тата оборудованийĕпе пĕрле Совет Союзĕн харпăрлăхĕ пулса тăнă пирки, Совет Правительстви, çав компанисене никель рудникĕсемшĕн пĕтĕмпех тÿлесе татмашкăн, Канада Правительствине çак Протокола алă пуснă кунран пуçласа 6 çул хушшинче 24 миллион Америка долларĕ чухлĕ укçа тÿлет. Вĕсене вăл пĕртан пайсемпе тÿлет. Америка долларĕсем вара пĕр унци ылттăншăн 35 доллар тÿлемелли хакпа шутланаççĕ.

Çак Протокола Мускавра 1944 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче виçĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашни экземплярне вырăс чĕлхипе тата акăлчан чĕлхипе çырнă, икĕ чĕлхепе çырнисем те пĕртан шутланаççĕ.

СССР Правительстви хушнипе
В. ДЕКАНОЗОВ

Пĕрлешÿллĕ Королевство Правительстви хушнипе
АРЧИБАЛЬД КЛАРК КЕРР

Канада Правительстви хушнипе
Д. УИЛГРЕСС.

Çак ыйту пирки çырнă пĕлтерĕве Оттавăпа Лондонра пĕр вăхăтрах пичетлесе кăлараççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 19-мĕшĕнче ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, БИГАУНЬЦИЕМС, ЛАПМЕЖЦИЕМС, РАГАЦИЕМС, ИЗКОПИ, ЭРЦЕС, СЫЛЫНИ, СПРАГУОЛИ ялĕсене туртса илнĕ.

Чехословаки çĕрĕнче, румынсен СИГЕТ ятлă хулинчен çурçĕртерехре, пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса КОБЫЛЕСКА ПОЛЯНА, ВИЖНА АПША, НИЖНА АПША, СРЕДНИ-АПША, МАЛЫЙ БОЧКОВ, ДОЛЫ, БИСЕРИКА-АЛБЫ, СЛАТИНА-СЕЛО ялĕсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, БАЙА-МАРЕ хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БАЙА-СПРИЕ, ТЭУЦИ, БЭЙЦА, ОДЕШТИ, СТРЕМЦИ, ШАМСУД, САРМАШАГ, КАРАСТЕЛЕК, КАМАР, МАРКА ятлă пысăк ялсем тата БАЙА-СПРИЕ, САСАРИ, БУШАГ, САРМАШАГ, ПОРЦ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Венгрире ДЕБРЕЦЕН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, БЕРЕТТЬО-УЙФАЛУ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата НАДЬ-ЛЕТА, ВЕРТЕШ ХОШСУ-ПАЛЬИ, ШАРАНД, БАГАМЕР, УЙ-ЛЕТА, ХАЙДУ-ВАМОС-ПЕРЧ ялĕсене йышăннă. Ку районра октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшĕччен пирĕн çарсем нимĕççемпе венгерсен 11.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем — 91, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем — 29, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 222.

Югославире пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, тăшмантан БЕЛГРАД хулине тасатассишĕн çапăçнă. Белград хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман çарĕсен çавăрса илнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе ăнăçлăн çапăçнă. Октябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем çав районра çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем — 18, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 300 ытла, бронетранспортерсем — 20, пулеметсем 175, радиостанцисем — 75, автомашинăсем — 2.000 ытла, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 1.200 ытла, лашасем — 500, тĕрлĕ складсем — 26. 5.700 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 35 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 50 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Иелгава (Митава) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн Рига заливĕ хĕррипе наступлени туса пыракан çарсем нимĕççене вăйлă çирĕплетнĕ Рагациемс ятлă пунктран хăваласа кăларнă. Темерипе Тукумс хули хушшинчи чугун çул районĕнче кĕрешекен совет чаçĕсем хытă çапăçнă хыççăн 10 километр таран малалла кайнă, темиçе ял туртса илнĕ. Тăшман хăйĕн унти çарĕсене çĕнĕ чаçсем хушса вăйлатнă. Нимĕçсем çапăçăва хăйсен 389-мĕш пехотнăй дивизине кĕртсе янă, ăна Германирен тинĕспе халь çеç килсе çитнĕ салтаксем хушса панă. Тăшман контратакисене сирсе-сирсе ярса, пирĕн çарсем 800 нимĕçе ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Чехословаки çĕрĕнче румынсен Сигет хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем Тисса шывĕ улăхĕ тăрăх наступлени туса пынă. Тăшман Нижна Апша ялĕ районĕнче çирĕпленсе ларма хăтланнă. Нимĕçсем унти паха çÿллĕ вырăн çине артиллери батарейисем, пулеметсем лартнă та улăха персе кĕмелли пур вырăнсене те тĕл персе тăнă. Пĕр чаçри гвардеецсем аякран кайса çаврăннă та çав çÿллĕ вырăнти гитлеровецсене флангран тата тылран атакăланă. Тăшман гарнизонне хăваласа янă. Пирĕн боецсем нимĕççене шыв хĕрриче хĕстерсе лартнă та йывăр çухатусем тÿснĕ. Тăшманăн 480 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. 12 тупă тата боеприпаспа апат-çимĕçĕн темиçе складне тыткăна илнĕ.

* * *

Венгрире Дебрецен хулинчен кăнтăртарахра пирĕн танкистсем, кавалеристсем тата пехотинецсем аякран кайса çаврăннă та тăшмана Шебеш-Кереш ялĕпе Беретьо ялĕ хушшинчи канал хĕррине хĕстерсе лартнă. Хăйсен тĕп вăйĕсенчен татăлса кайнă нимĕç чаçĕсем çурçĕрелле татса тухма хăтланнă, анчах та вĕсене аркатса тăкнă. Октябрĕн 13-мĕшĕпе 18-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕççен 89 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине тата 174 хир туппине пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейсем хушшинче 17 паровоз тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 20 чугун çул эшелонĕ пур. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пĕр соединени чаçĕсем 20 километр малалла кайнă та Дебрецен хулинчен 17 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Хайду-Вамос-Перч ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ.

* * *

Пирĕн çарсем Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле Белград хули урамĕсенче çапăçнă. Аркатса тăкнă тăшман гарнизонĕн юлашкисем хулан çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче хытă хирĕç тăраççĕ. Пирĕн штурмлакан отрядсем хулан çав пайне гитлеровецсенчен тасатаççĕ. Тăшман пысăк çухату тÿсет. Кун каçиччен пĕр кварталта кăна 400 эсэсовеца çити пĕтерсе тăкнă. Советсен Верный майор командир пулса ертсе пыракан саперĕсем Югослави боецĕсемпе пĕрле пĕр ушкăн çурта хупăрласа илнĕ те гранатăсем вăркăнтарма тытăннă, 124 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Телĕр кварталта пирĕн подразделенисем гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белград хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман çарĕсен çавăрса илнĕ ушкăнĕ «хурантан» татса тухма хăтланса пăхнă. Нимĕçсем кункаçиччен татти-сыпписĕр атакăсем тунă, анчах та, çав тери пысăк çухату тÿснĕ пулин те, çавăрса илнĕ ункăна татма пултараймаççĕ. Пирĕн пехотинецсемпе танкистсем, çав тери вăйлă пыра-пыра çапса, нимĕç çарĕсен çав çавăрса илнĕ ушкăнне темиçе пая уйăрса янă та халĕ пайăн-пайăн пĕтерсе параççĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен темиçе пин нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Ку районра пур çулсем те тăшмантан тытса илнĕ тупăсемпе, автомашинăсемпе, лавсемпе тулса ларнă. Нимĕçсен хăшпĕр подразделенийĕсем, хирĕç тăма пăрахса, тыткăна паранаççĕ. Тыткăна илнисен хисепĕ пĕрмаях ÿссе пырать.

* * *

Çурçĕр флотĕн авиацийĕ тăшманăн Варангер-фиордĕнчи суднисен караванне темиçе хутчен те умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнă. Бомбăсемпе торпедăсем пырса тивнипе нимĕççен 3 транспорчĕ, пĕр миноносецĕ, 2 хурал карапĕ, 2 тральщикĕ, пĕр хăй тĕллĕн çÿрекен десант баржи тата 4 хурал катерĕ шыва путнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕççен 14 самолетне персе ÿкернĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ парти ретне илес ĕç мĕнле пыни çинчен

МУРКАШ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Çак кунсенче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху икĕ ыйту: парти ретне илес ĕç районра мĕнле пыни тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана мĕнле тултарнипе выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленни çинчен сўтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа пухура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Ильин юлташ доклад туса пачĕ. Районри пуçламĕш парторганизацисем чылайĕшĕ парти ретне илес ĕçе лайăхлатнă. Кăçалхи мартпа сентябрь уйăхĕсем хушшинче районри парторганизаци пĕтĕмпе 36 çынна, вĕсенчен 10 çынна парти членне, 26 çынна кандидата илнĕ. Ку тĕлĕшпе партин Ярапайккассинчи, Орининăри пуçламĕш организацисем лайăх ĕçлеççĕ. Ярапайккассинчи пуçламĕш парторганизаци улттă уйăх хушшинче 7 çынна парти ретне илнĕ.

Парти ретне илес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Районри çĕрĕç пайĕнчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Албутов), Матьăкри пуçламĕш парторганизаци çак вăхăт хушшинче парти ретне пĕр çынна та илмен. Асăннă парторганизацисем партире тăман актив хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе организациленмен. Вĕсем уйрăм коммунистсемпе те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ: вĕсене поручениесем памаççĕ, пухусем ирттермеççĕ.

Районри пуçламĕш парторганизацисем чылайĕшĕ комсомолецсене парти ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çак улттă уйăх хушшинче районра мĕн пурĕ те 7 комсомолеца кăна парти ретне илнĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа пухура райисполком председателĕ Федоров юлташ доклад туса пачĕ. Районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Мĕнпур 74 колхозран Молотов ячĕпе тăракн колхоз кăна плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Район ĕнесем ĕрчетмелли плана 67 процент, сысмасем ĕрчетмелли плана 70 процент, сурăхсем ĕрчетмелли плана 74 процент, лашасем ĕрчетмелли плана 86 процент кăна тултарнă. Уйрăмах «Çĕнĕ хунав», «Динамо», «Новая жизнь», Тельман ячĕпе тăракан колхозсем плана начар тултарса пыраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленесси çинчен ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ ятарласа йышăннă постановление районра чылай колхозсем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çав постановление йышăннăранпа тăватă уйăх иртрĕ пулин те, районра лашасем усрамалли 101 витерен 71 витине кăна юсанă, ĕне витисене, сурăх витисене юсас ĕç те çавнашкалах вăрах пулса пырать.

Докладсем итленĕ хыççăн прение 12 коммунист тухса калаçрĕç. Пухура ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Енчиков юлташ пулчĕ.

Пуху, малашне тумалли конкретлă ĕçсем палăртса, решенисем йышăнчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.
Т. ИВАНОВ.

„Депутат" колхозра хĕле хатĕрленмеççĕ

Ишлей районĕнчи Васликасси ялсоветне кĕрекен «Депутат» колхозра выльăх витисене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Июнь уйăхĕнчех лаша витин урай хăмисене типĕтме хĕвел çине кăларса хучĕç. Нумаях пулмасть çав хăмасене сарма тытăнсан, çурри ытла саланса — «типсе» кайни курăнчĕ. Хăмасене вăхăтра пухман пирки вĕсене вутта вакласа пĕтернĕ. Вите ытти енчен те хатĕр мар, кантăкĕсем çук, алăкĕсем те ванса пĕтнĕ.

Ĕнесемпе сурăхсем пĕр витере чĕркуççи таран пылчăк çăрса тăраççĕ. Ферма çурчĕн тăррине витмен. Апла пулсан та ферма заведующийне С. Матвеева юлташа çавăн пек йĕрке пăшăрхантармасть. — — Елкĕрĕпĕр-ха,—тет вăл, васкама юратманскер.

Кунта ялхуçалăх машинисемпе инвентаре те хисеплемеççĕ. Фермăран аякра та мар жнейкăсем, плугсем, сўресем тата ытти машинăсем юхăнса лараççĕ. Вĕсене ĕçленĕ хыççăн никам та тасатман, сарайне тирпейлесе лартас тесе те никам та тăрăшмасть.

Колхоз председателĕ М. Борисов юлташ кашни кунах çав машинăсем патĕнчен колхоз правленине иртсе çўрет, вĕсене тирпейлесе хурас пирки шутламасть. Районри работниксем те колхозра час-часах пулаççĕ, анчах вĕсем те нимĕн те шарламаççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ГОСПИТАЛЬРИ ВРАЧСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

Октябрĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарти пĕр госпитальре (6-мĕш шкул) врачсен конференцийĕ пулать. Конференцире «Сепсис и раневое истощение» темăпа госпиталь хирургĕ Ю. А. Ребушкин юлташ доклад туса парать. Конференцие хулари медицина работникĕсене чĕнеççĕ.

ИНЖЕНЕРЛА-ТЕХНИКА РАБОТНИКĔСЕМПЕ СТАХАНОВЕЦСЕМ РАЦИОНАЛИЗАЦИ ЫЙТĂВĔСЕНЕ СЎТСЕ-ЯВНĂ

Канашри вагонсем юсакан заводри инженерла-техника работникĕсемпе стахановецсен [illegible]

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ИСТОРИЙĔ ÇИНЧЕН ЛЕКЦИСЕМ

Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕ чăваш халăхĕн историйĕ çинчен лекцисем иртерет. Октябрĕн 19-мĕшĕнче [illegible]

СТЕНА ХАÇАТ РЕДАКТОРĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

Нумаях пулмасть Якунин юлташ [illegible]

Совет патриочĕсем фабрикăна çăлса хăварнă

ЛАТВИ ССР-ĕнче ОГРЕРИ ХУТ ФАБРИКИНЕ ХУТА ЯНĂ

[illegible]

СССР НАУКА АКАДЕМИЙĔН ЭКСПЕДИЦИЙĔ КРЫМРА

[illegible] вăхăтрах Совет Союзĕн кăнтăр пайĕнче пысăк астрофизикăлла обсерватори тума [illegible] илме Крыма СССР Наука академийĕн экспедицийĕ пынă. (ТАСС).

КРАМАТОРСКРИ ЦЕМЕНТ ЗАВОДНЕ ХУТА ЯНĂ.

Краматорскри цемент заводĕн пĕр пайне юсаса хута янă. Меловой карьер, канатлă çул, çĕр кăмрăкне, цемента авăртмалли хăватлă агрегат тата ыттисем те ĕçлеме пуçланă. Темиçе тонна клинкер туса кăларнă ĕнтĕ. (ТАСС).

Пирĕн землякçем

Гварди полковникĕ Виталий Воскресенский

Виталий Воскресенский Шупашкар хулинче çуралса ўснĕ. Вăл, хулари ытти çамрăксем пекех, çуллахи лăпкă каçсенче, хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле, Атăл хĕрне уçăлма тухнă, театрсене çўренĕ, музыка итлеме юратнă. Час-часах пулă тытма çўренĕ. 1928 çулта кĕркунне Виталий Воскресенский çар училищине вĕренме кайнă.

Тепĕр 4 çултан Шупашкара пулăс командирăн малтанхи пархатарлă ĕçĕсем çинчен лайăх хыпар çитнĕ. Атăл тăрăхĕнчи çар округĕнче пулса иртнĕ кĕркуннехи маневрсенче батарейăн çамрăк командирĕ Виталий Воскресенский, тактикăллă задачăсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе, вата командирсене те тĕлĕнтернĕ. командованин ăна тав тунă. Çакăн хыççăн та вăл хăйĕн пĕлĕвне ўстерессишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр тăрăшнă.

Воскресенский юлташăн батарейи хăйчисне яланах çўлте тытса пынă. Унăн артиллерисчĕсем тĕл пенĕ, тупăсене пĕрмаях тирпейлĕ пăхса усранă. Батарея командирĕ çамрăк артиллеристсене куллен тăрăшса вĕрентнĕ. Вунă çул хушшинче Воскресенский юлташ командир пулса ертсе пыракан часть темиçе çĕр пултарулла артиллеристсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Вăрçă пуçлансан вара вĕсем пурте тупăсем патне тăнă.

Совет Правительстви Воскресенский юлташăн пархатарлă ĕçне пысăка хурса хакланă, ăна «Знак почета» орденĕпе наградăланă.

Вăрçă пуçланнă вăхăтра Виталий Воскресенский академире пулнă. Унтанпа ĕнтĕ вăл вăрçăн вăрăм та йывăр çулне утса тухнă. Тăшман çине тупăсенчен пирвайхи хут пени нихăçан та асран каймĕ. Хаяр та йывăр çапăçу пулнă ун чухне. Совет артиллерисчĕсем тăшман танкĕсене сывăхран тўррĕн персе пĕтерсе пынă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Артиллеристсем ывăннă пулин те хăйсен вырăнĕсенчех юлнă.

Воскресенский юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн мухтавĕ кунсеренех ўссе пынă. Сталинград çинче нимĕç самолечĕсен сасси кĕрлесе тăнă, Сталинград çĕрĕ çине пиншер бомбăсем ўкнĕ вăхăтра Воскресенский юлташăн артиллерисчĕсем тупăсенчен хăватлăн персе, нимĕç танкĕсене малалла кайма чарса тăнă. Хулари çунса арканнă çуртсем артиллеристсене тата та хастарлăн çапăçма чĕннĕ. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерў çулĕ гварди полковникĕн Виталий Воскресенскин артиллерисчĕсене Сталинград патĕнчен Украинăри Николаев хули патне илсе çитернĕ.

Артиллеристсем 1944 çулхи çуллахи наступлени вăхăтĕнче те хăйсен пултарулăхне кăтартса панă. Совет артиллерисчĕсем хăватлăн пыра-пыра çапнине пула нимĕçсен Жлобин, Бобруйск, Слоним хулисем патĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ укреплениĕсене аркатса тăкнă.

Уйрăмăнах нимĕçсем Белоруссире çирĕплетнĕ пунктсене аркатасси йывăр пулнă. Нимĕçсен çирĕплетнĕ вырăнĕсене штурмлана сехетсенче вĕсем çине пиншер тупăсенчен персе тăнă. Артиллерирен персе тăни 100 километртан илтĕннĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каласа панă тăрăх, совет артиллерийĕ вăйлăн персе тăни нимĕç салтакĕсене пĕтĕмпех ăнран кăларнă. Нимĕçсен 35-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 109-мĕш полкăн салтакĕ Эрнст Крюгер çапла каласа панă. «Вырăссем артиллерирен пеме тытăнсанах пирĕн полкра калама çук хăраса ўкрĕç. Офицерсем, салтаксене пăрахсах, тыла тарчĕç».

Жлобин тата Слоним патĕнчи укреплениĕсене штурмлана çĕрте гварди полковникĕн Виталий Воскресенскин артиллерисчĕсем те пулнă. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ 1944 çулхи июнĕн 25-мĕшĕнче кăларнă приказра çапла каланă: «...нимĕçсен оборонине татса кĕрессишĕн çапăçнă чухне... Воскресенский полковникăн... артиллерисчĕсем чапа тухнă».

Воскресенский артиллерисчĕсен паттăрлăхне Слоним тата Лунинец патĕнче-пулнă çапăçусем хыççăн та палăртнă.

Пирĕн землякăн Виталий Воскресенскин паттăрлăхĕпе пултарулăхне Совет Правительстви çичĕ хут наградăласа паллă тунă. Полковник Виталий Воскресенский Ленин орденĕн, Хĕрлĕ Ялав орденĕн, Кутузовпа Богдан Хмельницкий орденĕсен, Отечественнăй вăрçă орденĕн, Хĕрлĕ Çăлтăрпа «Знак Почета» орденĕсен кавалерĕ пулса тăрать.

Нумай пулмасть пирĕн мухтавлă земляк хăйĕн тăван хулинче Шупашкарта пулчĕ. Унта вăл хăйĕн тăванĕсемпе юлташĕсене совет вонĕсен пархатарлă ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ тата хăйĕн землякĕсем — Шупашкар хулинчи ĕçсынисем фронта пулăшассишĕн мĕнле ĕçленипе паллашрĕ.

Полковник Виталий Воскресенский фронта тухса кайнă чухне хăйĕн чаçĕнчи артиллеристсем гварди ялавне малашне те пысăк тивĕçре тытса пырĕç тесе шантарса каларĕ.

В. СТАНЮКОВ.

Çĕнтерў çулĕ

Кавказран — Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан — Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Тăшмана шăтăка чикиччен,
Гитлера мăйĕнчен çакиччен
Пирĕн çарăн малтан малаллах каймалла!

Кавказ сунчĕ пире вут-чĕре,
Атăл сунчĕ пире аслă çул:
— Çĕршыв ывăлĕ, çак тĕнчере
Паттăртан паттăрри эсĕ пул! —
Çак пилпе ĕмĕртен ĕмĕрех
Эпир хамăр юратнă çĕре
Мăшкăла кăларман, кăларассăмăр çук!

Çул параççĕ пире шыв-шурсем,
Пуç таяççĕ пире сăрт-тусем,
Йыхăраççĕ пире тăвансем:
— Арăсланăмăрсем, килĕрсем! —
Хĕрлĕ Çар малалла пынăçем
Йăлтăраççĕ сынсен кусĕсем,
Вăй илсе чĕрĕлеççĕ ялсем, хуласем.

Ĕмĕрсен çĕнтерў çулĕрне
Пирĕн вилĕмсĕр маршал хывать.
Кĕтесрен кĕтессе тĕнчере
Янăрать пирĕн хурçă хăват.
Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕннĕрен
Пĕтĕм çĕр чĕрĕлет çĕнĕрен,
Вăл татах ирĕкреххĕн те аслăн сывлать.

Кавказран—Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан—Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Берлина çĕмĕрсе кĕриччен,
Ирсĕрсен йăвине ишиччен
Хĕрлĕ Çарăн малтан малаллах каймалла!

Аркадий ЕÇХĔЛ.

«ДНИ И НОЧИ» ЯТЛА ФИЛЬМ ВАЛЛИ СТАЛИНГРАДРИ ВЫРАНСЕНЕ ЎКЕРСЕ ИЛНĔ

Сталинградра К. Симонов сценарийĕ тăрăх хатĕрлекен «Дни и ночи» ятлă илемлĕ фильм валли кирлĕ вырăнсене ўкерсе илнĕ.

Историллĕ çапăçусем пулса иртнĕ вырăнсенче Сталинградри нихăçан манăçа тухми çапăçусен тĕп сценисене ўкерсе илнĕ. Халĕ ĕнтĕ экспедици Мускава таврăнать, унта павильонра ўкермелли сценăсене ўкерет те «Мосфильм» студийĕнче çав фильма йĕркелесе çитерет. Фильм ўкерекен коллектив, нихăçан манăçа тухми событисене тĕрĕсрех кăтартас тесе, питĕ тăрăшса хавасланса ĕçлет. (ТАСС).

Тăшмана çĕнтерессишĕн

«Гвардеец» колхозăн конюхĕ Якку пичче ватă ĕнтĕ, 64 çулта. Хăлхи те самаях хытнă пирки ытла нумай сăмах ваклама юратмасть. Анчах та Сăръел ялĕ патне çывхарса пынă чухне вăл çул тăршшĕпе паклаттарса пынă чĕлĕмне çăварĕнчен кăларса тарантас ларкăчи çине шаккарĕ те ăна кăсъине чиксе çапла каларĕ:

— Çак Сăръел ялĕнчен тĕлĕнмелле вара,—пуçларĕ вăл. — Колхоз тăваччен çак яла кĕтўçĕсен ялĕ тетчĕç. Чăн та, таврари ялсенчи кĕтўçĕсем йăлтах Сăръел ялĕнченччĕ. Вĕсен нихăçан та çиме çитмен, хăйсен çĕрĕсем çине йĕркеллĕ тырă акса туман, вĕсен çĕрне пĕтĕмпе тенĕ пекех çывăхри ялсенчи хресченсем акатчĕç. Кĕркуннепе Сăръел уйĕнче акмасăр юлнă анасем çинче армути, мăян курăкĕсен типнĕ тунисем шăхăрса ларатчĕç. Ялне пырса кĕрен—хăвăртрах тухса каяс килетчĕ. Пĕчĕк улăм витнĕ çуртсем çĕçнĕ, пўрт хыçĕнче те нимĕн те çук. Ваттисем калашле: çилĕ малтан кĕрет те кайран пĕр чарăнмасăрах шăхăрса тухса каять. Выльăх-чĕрлĕх енчен вара—килĕренех качака усратчĕç, ĕне питĕ сайра тĕл пулма пулатчĕ. Итемсене (эс чăваш пулсан, пĕлетĕн пулĕ) пирĕннисем ял тулашне тăватчĕç. Кунта вара апла мар, 4—5 урапаллă капанне кашнинех картишне купалатчĕ те, унтах тăпачăпа пĕрик виç кун хушши çапкаласа тырри-пулливе пуçтаратчĕ. Çур хĕл çитсен, вĕсен çиме пĕтетчĕ. Вĕсем е аяккалла ĕçлеме каятчĕç, е таврари ялсене хурала е тарçа кайса кĕретчĕç. Хальхи çинчен каламастăп, шăллăм. Унта эсĕ ху кайса курăн,—терĕ Якку пиччe. чĕлĕмне каллех тапак тултарса.

Анчах чăтаймарĕ:

— Пăх халĕ, мĕнле улăм урисем тăсăлса лараççĕ ял тулашĕнче. Сăръелсем кăçал туса илнĕ тырра ĕлĕк вĕсем вун çул хушшинче те туса илеймен. Вĕсем пек нумай тырă туса илекен колхоз таврара та пĕр çак Аслă Пăла-Тимеш колхозĕ çеç теççĕ.

Чăнах та, Якку пиччe каласа панă ял хальхи Сăръелтен пĕлĕтпе çĕр пекех уйăрăлса тăрать.

Ял тулашĕнче те, ял варринче те колхоз витисем, ферма çурчĕсем, машина сарайĕсем сарăлса лараççĕ. Ял варринче иушар сарайĕ йăмрасен тăррипе курăнса ларать. Вышка çинче кăнтăрла та, çĕрле те хурал тăраççĕ. Кашни сехетрех чан çапса вăхăта пĕлтереççĕ. 500 çын ытла вырнаçмалăх клуб, вулав çурчĕ, медпункт, шкул çурчĕсем. Колхоз правлени, ялсовечĕ, почта отделенин контори, перекет кассинкĕ урам хушшинче ларакан пысăк çурта вырнаçнă. Ку вара хăшпĕр районсен центрĕнчи учрежденисемпе танлашма та пултарать. Колхоз председателĕн пысăк пўлĕмĕнче фикус, роза текен чечексем уяр кунхи пĕлĕт тĕслĕ краскăпа сăрланă çўллĕ маччаналла кармашаççĕ.

Колхоз канцелярийĕнче тăпăл-тăпăл тумтирсем тăхăннă бухгалтерпа счетовод тата учетчик лараççĕ. Урайĕнче пĕр çўп-çап çук. Стена çинче — тĕрлĕ краскăпа сăрласа тунă диаграммăсем, колхоз пуянлăхне, колхозниксен культури тата пуянлăхĕ мĕнле ўссе пынине, колхоз вăрçă вăхăтĕнче фронта мĕнле пулăшнине кăтартакан диаграммăсем, стена хаçачĕсем, вăрçă вăхăтĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнекен лозунгсем, çулпуçсен портречĕсем.

Çапла вара, Якку пиччe каланă пек, кĕтўçĕсемпе тарçăсен ялĕ пулнă Сăръел тĕлĕк пек асран çухалать те, санăн умна республикăри чи лайăх та пуян колхоз — «Марс» колхоз тухса тăрать. Колхозра пур çĕрте те йĕркелĕх. Тырă вырса пĕтернĕ хыççăнах жнейкăсене, лобогрейкăсене тасатса çу сĕрсе хунă. Сеялкăсене, плугсене, сўресене, хăмăтсене турта пăявĕсемпе вĕренсене пурне те тирпейлесе хунă. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ. Халĕ авăн çапасси çеç юлнă. Ун валли кирлĕ машинăсем итемре. Кунта кăнтăрла та, çĕрле те авăн çапаççĕ. çак кунсенчех çак ĕç те пĕтет. Çак колхоза ĕлĕк батрак пулнă çын, халĕ пултарулла коммунист А. Г. Гаязов 14 çул хушши председатель пулса ертсе пырать. Вăл, 14 çул хушши яла ертсе пырса, ăна пуян та культурăллă колхозлă ял туса хунă. «Марс» колхоз членĕсем вăрçă çулĕсенче фронта, Тăван çĕршыва ытларах тырпул, пахча-çимĕç парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Иртнĕ çул вĕсем государствăна кооперации урлă 10.000 пăт тырă сутнă. Кăçал государствăн виççĕмĕш военнăй Заемне 500,000 тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине те çийĕнчех парса татнă. Государствăна обязательство тăрăх памалли тырра сентябрĕн 5-мĕшĕнчех парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 2000 пăта яхăн панă.

«Марс» колхозпа унăн председателĕ А. Г. Гаязов çинчен республикăра кăна мар, республика тулашĕнче те, фронтра та пĕлеççĕ. Колхоз председателĕ А. Г. Гаязов юлташ иртнĕ çул «Колхозник Чувашии» ятлă танксен колоннине тума 105.000 тенкĕ укçа панă. Государствăн виççĕмĕш Военнăй Заемне 40.000 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Кăçал вăл хăй çемьипе 14 çул хушши ĕçлесе пухнă тыррине сутса самолет илме 110.000 тенкĕ панă. Çапла вара, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ çак ватă коммуниста, пултарулла руководителе Гаязов юлташа икĕ хутчен саламласа, Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунă. Сталин юлташăн ытттăнран та хаклă телеграммисене Гаязов юлташ яланах хăйĕн ватă кăкăрĕ çинчи кăсъинче чиксе çўрет. Ватăлмалăх кунĕнче аслă Сталинран салам илни ăна вăй парать, хавхалантартаь.

Нумаях пулмасть, Гаязов юлташ СССР Сывлăш-Çар вăйĕсен Командующин заместителĕнчен, авиаци генерал-полковникĕнчен Никитинран çыру илнĕ, унта çапла çырнă: «Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хушнă тăрăх, Эсир панă укçапа самолет тунă. Вăл самолет çине: «От колхозника Гаязова А. Г. — Герою Советского Союза тов. Кочеткову» тесе çырнă. Вăл самолета Кочетков чаçне яратпăр».

Нумай та вăхăт иртмен. Совет Союзĕн Геройĕ, пирĕн земляк Кочетков тăракан чаçри политотдел начальникĕнчен Гаязов юлташ хумханулла çыру илнĕ. Унта çапла çырнă: «Хисеплĕ те çулăмлă патриот Гаязов юлташ! Сирĕн укçăрпа тунă «Ильюшин-2» самолет пирĕн чаçе çитрĕ. Вăл самолета, Эсир ыйтнă тăрăх, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хушнипе, Совет Союзĕн Геройне Кочеткова памалла. Çак самолета Кочеткова пама эсир хăçан килесси çинчен пĕлтерĕр»,—тенĕ. Унсăр пуçне çырура Совет Союзĕн Геройĕ Кочетков юлташ тăшмана хирĕç геройла çапăçни çинчен çырса пĕлтернĕ. «Марс» колхоз членĕсем тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени тата колхозри стахановецсем çинчен çырса пĕлтерме ыйтнă.

«Марс» колхоз членĕсем çак çыру хыççăн фронта пулăшас тĕлĕшпе татах та вăйлăрах ĕçлеме тытăннă. Хĕрлĕ Çар фончĕ валли планран ирттерсе 3000 пăт тырă государство складне ирттерсе пама пулнă.

А. Г. Гаязов сталинла соколсем патне ăшшăн, пĕтĕм чĕререн çыру çырнă. Вăл колхоз фронта мĕнле пулăшни çинчен, колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени çинчен çырса пĕлтернĕ.

— Эпĕ ватă, сывлăхăм та начар, анчах тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине эпĕ ялачах пама хатĕр, — тесе вĕçленĕ хăйĕн çырăвне чаплă патриот Гаязов юлташ.

В. ЯСТРЕБОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă:

Шельда шывĕнчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Прескенс патĕнчен пĕр 3.000 ярд малалла кайнă. Союзниксем Скондейкерен хĕвелтухăçнерехре тата Эйзендейкерен кăнтăртарахра ăнăçусем тунă. Голландире çарсем савăлланса кĕнĕ районăн хĕвелтухăç пайĕнче союзниксен çарĕсем паян ирхине Венрай хулине тытса илнĕ.

Союзниксен çарĕсен чаçĕсем Аахен хулинче кашни çуртшăнах çапăçаççĕ. Тăшман питĕ хытă хирĕç тăрать. Истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксем хулан çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи тăшман çарĕсем çирĕпленсе ларнă çуртсене пыра-пыра çапнă. Аахен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен чаçĕсем дотсем нумай пĕтерсе тăкнă, тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, союзниксем çарĕсем малалла кайнă. Аахенран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăракан чаçсем тăшман пехотипе танкĕсен икĕ контратакине сирсе янă.

Гюртген хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшманăн вăйлах мар контратакисене сирсе янă. Союзниксен çарĕсем Вогез тăвĕсем патĕнче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă; унти хăшпĕр пунктсенче çирĕпленсе ларнă. Тăшман унта çаплах вăйлă хирĕç тăрать.

Союзниксен авиацийĕ Голландири çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă. тăшманăн Голландипе Германири объекчĕсене питĕ вăйлă пыра-пыра тапăннă.

СОМЕРВЕЛЛ ГЕНЕРАЛ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Тулашри политикăпа шалти политика ыйтăвĕсемпе çулленех пухакан конференцире (ăна «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пухать) Америка çарĕнчи интендант службин начальникĕ Сомервелл генерал-лейтенант сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: союзниксем Францире вăрçма пуçланăранпа унта 109 кун хушшинче 2,5 миллион салтакпа офицер илсе пырса антарнă; унта 500.000 машина ытла тата 17 миллион тонна боеприпас илсе пынă.

Самервелл тата çапла каланă: союзниксем Францире фронталла каякан нефтепровод туса пĕтернĕ. Çав нефтепровод тăрăх куллен пĕр миллион галлонран кая мар нефть юхтарма пулать. Материалсем илсе пырас ĕçре тата сывлăшри транспорт пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ.

Союзниксен авиацийĕ Кельнпа Кассель хулисене тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Кельн хулине тапăннă. Октябрĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла Кельн хулине çĕнĕрен тапăннă. Ку тапăнура американецсен 1.300 йывăр бомбардировщикĕ пулнă, вĕсене 800 истребитель хўтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонран официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: октябрĕн 18-мĕшĕнче Америка авиацийĕн 8-мĕш корпусĕнчи 550 бомбардировщик ытла, 500 истребитель хўтĕлесе пынипе, Кельнпа Кассель районĕсенчи промышленность объекчĕсене тата сортировка тăвакан станцисене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: Болонья хулине каякан çултан çурçĕртерехре 8-мĕш арми чаçĕсем аялă фронтпа Писчиателло шывĕ патне пырса тухнă, хальхи вăхăтра вĕсем Чезен ятлă промышленноçлă хуларан икĕ мильăра тăраççĕ.

Фронтăн вăтаçĕрти пайĕнче 5-мĕш армин Америка чаçĕсем, Болонья хули çине наступлени туса пыракансенсем, кун каçиччен вăйлă çапăçнă хыççăн малалла кайнă. Америка чаçĕсем Бельмонте хули патне çитнĕ, унта халь вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче ирхине ирех Англин икĕ эсминецĕ тата «Терпсихора», «Кливленд» ятлă карапĕсем Эгей тинĕсĕнчи Скарпанто утравĕ патне пынă. Десант чаçĕсем çав утрав çине аннă, нимĕç гарнизонĕ вĕсене хирĕç тăман.

Афины хулине союзниксен çарĕсем пырсах тăраççĕ. Хула районне парашютлă çĕнĕ чаçсене антарнă.

Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хўтĕлесе пынипе, ĕнер Хĕвелтухăç Германири нефть тасатакан завода, çавăн пекех тата Вена хули районĕнчи промышленность объекчĕсене тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 1.500 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: Италире 8-мĕш арми чаçĕсем Писчиателло шывĕ хĕрринчи укрепленисене йышăннă. 5-мĕш армин Америка чаçĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Сулахай флангра Монте Пецца тўпемне йышăннă. Хĕвеланăç енчен Монте Кастильоне тўпемĕ çинчи паха позицисене тытса илнĕ, çав тўпем вăл çыран хĕрринчи çула хўтĕлесе тăрать.

Октябрĕн 18-мĕшĕнче Крит утравĕнчен çурçĕртерехре ларакан Сантолин утравĕ çинчи тăшман гарнизонĕ Англи карапĕн командине парăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн чугун çул объекчĕсем çине, суднăсем çине тата мототранспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Англи флочĕ тăшманăн темиçе çар карапне путарнă.

БОЛГАРИРЕ ÇАРА ПЕТЕМ ХАЛАХ

СОФИЯ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, правительство çара пулăшмалли фонда укçа хывма чĕннине Болгари халăхĕ питĕ савăнса кĕтсе илнĕ. Кампани пуçлансан виçĕ кун хушшинчех 1.735 пин лев укçа пухнă.

Укçа пухас ĕçре болгар çамрăкĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çапла, Бургас

ПУЛАШМАЛЛИ КАМПАНИ ПЫРАТЬ

хулинчи çамрăксем çар валли 2.500 посылка тата 470.000 лев укçа пухнă. Ямбож хулинчи çамрăксем çара 1.600 посылка янă. Çав хулари хĕрарăмсемпе хĕрсем болгар салтакĕсем валли 500 мăшăр кĕпе-йĕм çĕлесе панă. Поморе хулинчи çамрăксем çара 900 посылка тата 280.000 лев укçа янă.

Гитлер çĕнĕрен „сверхтотальнăй" мобилизаци туса иртерет

ГЕРМАНИРЕ 16 ÇУЛТАН ПУÇЛАСА 60 ÇУЛА ÇИТНĔ МĔНПУР АРÇЫНСЕНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра Гитлер приказне пичетлесе кăларнă. Çав приказра Гитлер 16 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ мĕнпур арçынсене хăйне уйрăм «ополчение», «фольксштурм» тенĕскерне, мобилизацилесси çинчен пĕлтернĕ.

Гитлерăн çав приказĕнчен çакă курăнать: çав мобилизацие вăл Германи пĕтес патне çитсе тăнă пирки туса ирттерет. «Тăшман хăшпĕр фронтсенче Германи чиккинчех е унăн çывăхĕнчех тăрать»,—тет Гитлер хăйĕн приказĕнче. Германи пĕтес патне çитнине «фольксштурм» тума хушакан çав приказ çинчен сăмах тухса каланă Гиммлер та йышăннă. Вăл çапла каланă: Германишĕн «ăнăçусемпе телей кунĕсем вырăнне инкек-синкек кунĕсем сиксе тухрĕç», тенĕ.

Çак паллă: Гитлерăн çав приказне кăларичченех Германире «тотальнăй мобилизаци» туса ирттернĕччĕ, ăна Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн туса ирттернĕччĕ. Германи çарĕ валли çын тупас тесе, предприятисемпе учрежденисене питĕ вăйлă тураса тухнăччĕ. Тăрса юлнă аслă шкулсене, театрсемпе киносене, пурнăçра пулăшса тăракан предприятисене тата ыттисене те хупнăччĕ. Призыв пункчĕсене çул çитмен çамрăксене, старисксене тата инвалидсене хăвала-хăвала пухнăччĕ. Ĕç повинноçĕ йĕркипе хĕрарăмсене 50 çула çитиччен мобилизациленĕччĕ. Халĕ Гитлер ирĕксĕр çакна йышăннă ĕнтĕ: çав «тотальнăй мобилизаци» фашистсем ĕмĕтленнĕ чухлĕ çын тупса параймаи. Германин вăрçă ĕçĕсене мĕн чухлĕ те пулин лайăхлатма пултарайман. Паллах ĕнтĕ, Гитлерăн çĕнĕ «сверхтотальнăй» мобилизацийĕ те, çул çитмен çамрăксемпе старисксене пухса, Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене çынсем нумай тупса пама пултараймасть.

«Фольксштурм» туса ăна ертсе пырас ĕçе СА, СС, гитлеровецсен моторизациленĕ корпусĕн тата гитлерла çамрăксен руководителĕсене хушнă. Тата çапла пĕлтернĕ: «Фольксштурм» Гиммлера пăхăнса тăрать (Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн Гиммлера «шалти çар» текен çарăн командующине лартнăччĕ), унпа Гиммлер приказ парсан çеç усă курма юрать. Çаксем пурте ĕнтĕ Гитлер Германин яланхи çарĕ çине, унăн офицерĕсемпе генералĕсем çине шанма пăрахнине кăтартаççĕ.

ВЕНГРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЧЕРНОВЦЫ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио Венгрире лару-тăру лайăхланать тесе ĕнентерме тăрăшать. Анчах çав радио пĕлтернĕ хыпарсемех Венгрире лару-тăру çавăн пекех çивĕч тăнине кăтартса параççĕ. Венгри «министерствисен» сотрудникĕсем те Салаши влаçĕ çирĕппине ĕненмеççĕ. Чиновниксем нумайĕшĕ хăйсен ирĕкĕпех ĕçлеме пăрахнă. Çавăнпа Салаши «правительствин» ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ радиопа приказ панă. Çав приказра вăл хăйĕн министерствин сотрудникĕсене халех ĕçлеме тытăнма хушать, ĕçлеме тытăнманнисене питĕ пысăк наказани парассипе хăратать. Çав приказрах тата çапла пĕлтернĕ: министерство служащийĕсем Хорти регента панă присягăран «хăтăлаççĕ», вĕсен «çĕнĕ правительствăна» пăхăнса тăма присяга памалла пулать, тенĕ.

Будапештри радио пĕлтернĕ тăрăх, Венгри железнодорожникĕсем «правительство» хушнисене пăхăнмаççĕ, вĕсем ĕçлеме пăрахнă. Халь Салаши влаçĕсем çакăн пек приказ кăларнă: ĕçлеме пăрахнă мĕнпур машинистсен, кондукторсен тата кочегарсен октябрĕн 21-мĕшĕнчен кая юлмасăр хăйсене çывăх станцисене пымалла. Çакна пăхăнманнисене пысăк наказани параççĕ, тенĕ.

Венгрири лару-тăрăва Будапештран çакăн пек пĕлтерни те кăтартса парать: Салаши «правительствин» ларăвĕнче ĕç программине сўтсе-явнă вăхăтра шалти лару-тăрăва йĕркене кĕртмелли ĕçсем çинчен нумай калаçнă. Çав пĕлтерўре çапла каланă: Шалти ĕçсен министрне «шалтипе тулашри тăшмана шалти фронта хавшатма канкĕрлеме» хушнă, тенĕ.

КЕСКЕН

* Францин тинĕс-çар ведомствин пуçлăхĕ Жакино çапла каланă: Франци флочĕ Лăпкă океанри вăрçа хутшăнать, тенĕ.

* Француз писателĕсен наци комитечĕ нимĕçсем Францие йышăнса тăнă вăхăтра тăшмана пулăшса пурăннă хаçат-журналсен пур работникĕсене те писательсемпе журналистсен организацийĕсенчен кăларнă. Кăларнисем хушшинче Пьер Бенуа, Шатобриан, Рене Бенжамен тата ыттисем те пур. (ТАСС).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 21-мĕшĕпе 22-мĕшĕнче
КĂНТĂРЛА
ачасем валли ўкернĕ
«ЗОЛОТОЙ КЛЮЧИК»
ятлă саслă, илемлĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16 сехетре.

КАÇХИНЕ
саслă, илемлĕ фильм
«ЛЕРМОНТОВ»
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах
Зоя Космодемьянскаян
пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ўкернĕ
«ЗОЯ»
ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма тытăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00753 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 16.000 экз.